**Тĕп вырăнта – машинăпа трактор паркне çĕнетсе ĕç тухăçне ӳстересси**

# Ĕнер килнĕ техника – паянхи ĕçсен ăнăçлăхĕ

Кивви куллен укçа ыйтать, çĕнни вара пĕр вĕçĕм çĕнĕ ӳсĕме çĕклет, тухăçлă ĕçлеме хавхалану кӳрет. Çакна тĕпе хурса тата хăйсен вăйĕ çине шанса ĕçлеççĕ паян Шурчасемпе Шуркассисем, Кӳстерексемпе Вăрăмойсем тата Çĕньял Шурчасем. Пĕрле пĕр вăй пулса тăрăшаççĕ те – ӳсĕм çулĕ çинче нумайăшĕшĕн тĕслĕх пулса тăраççĕ. Çак чăнлăхпа тĕл пултăм эпĕ иртнĕ кунсенче “Герой” ял хуçалăх производство кооперативĕнче пулса çур аки епле иртнине паллашнă май.

“Герой” пĕрлешӳллĕ хуçалăхăн ял хуçалăх çĕрĕсем пурĕ 1290 гектар. Вĕсенчен сухаламалли çĕрсем – 1033 гектар. Çак çĕр çинче хуçалăхăн ӳсен-тăран культурисем туса илсе обществăлла вырăх ĕрчетме ĕне, сысна, сурăх фермисемпе конюшня, утар пур. Шурчара ял çумĕпе вырнаçнă машинăпа трактор паркĕ техникăна упрассипе çулсеренех районта кăна мар, республикăра та ыррисен, малтисен шутĕнче. Хуçалăх территорине кĕрсен унта та кунта пурлăх юхăнса выртнине курăймастăн та ĕç-хĕлпе кăштах та пулин паллашсан хуçалăх малашлăхпа пурăнни куç умне тухать: кунти çĕр ĕçченĕ – чăнах та çĕр хуçи.

Çăва тухрăмăр. Анчахрах-ха шăпланнă çурхи ака-суха ĕçĕсем хыççăн Шурча-Шуркасси таврашĕнчи хирсем ешĕл кавирпе витĕнме те ĕлкĕрчĕç. Ĕçсене вăхăтра пурнăçлани, ака-суха технологине пăхăнни, ĕçре энерги ресурсĕсем перекетлеме пулăшакан çĕнĕ техникăпа усă курни хуçалăх пурнăç аталанăвĕн утăмĕсенчен юлманнине кăтартса парать. Çапла вара хуçалăх кăçал кĕске хушăра 493 гектар çинче çуртрисем акса хăварчĕ, 120 гектар пĕр çул ӳсекен курăксем, 25 гектар выльăх кăшманĕ, 80 гектар çĕр улми йышăнчĕç. Çур аки ĕçĕсем вĕçленсенех акнă-лартнă культурăсене агротехника ыйтнă пек пăхса ӳстерес тĕллевпе тепĕр йышши техника хире тухрĕ.



В. Степанов, Е. Ершов механизаторсемпе А. Васильев водитель çĕнĕ трактор инструкцийĕпе паллашаççĕ.





С. Тимофеевапа В. Микушкин хуçалăх паркĕ çĕнелнипе кăсăкланаççĕ.

Ирлесех тирпейлĕ хирсемпе киленсе утнă май хуçалăхăн машинăпа трактор паркĕ патнелле пыратăп. Хĕвел çӳлех те хăпарман пулсан та, паркра ĕç шавĕ тăни Шурчасем тăрипе пĕрлех вăранса ĕçе кӳлĕнни пирки каларĕ. Акă паркран ĕнер-паян ĕçленипе çеç тусанланнă хăватлă ХТЗ-17221 трактор тухрĕ. Штурвал умĕнче унччен МТЗ-80 тракторпа ĕçлесе хăй шанчăклă механизатор пулнине кăтартнă Евгений Леонидович Ершов. Хуçалăха ку трактор уйăх каялла килнĕ те çĕнĕ вăйпа тӳрех çур акине кӳлĕннĕ: ПАУК-3,6 тата KOS-3,2, БДТ-7,5 агрегатсемпе çурхи культурăсем акма-лартма çĕр хатĕрленĕ. Парка кĕнĕ-кĕмен механизаторсен ушкăнĕ çĕнĕ тракторсемпе “Руслан” опрыскиватель патĕнче ĕçлени куç умне пулчĕ. Кунтах хуçалăхăн тĕп инженерĕ В. Леонтьев тата тĕп агроном З. Макарова.

– Çĕнĕ икĕ МТЗ-892 трактор ĕнер килсе çитрĕç. Паян вĕсене Владимир Бурцевпа Николай Никифоров ĕçе хатĕрлеççĕ. Володя, авă, паян-ыран çĕнĕ тракторпа тата нумай пулмасть ӳсентăрансен сăтăрçисемпе-чирĕсемпе кĕрешме укçалла туяннă “Руслан” агрегатпа хире тухмалла. Вăхăт кĕтмест. Коля вара шыв турттарса тăрĕ, – паллаштарчĕ çĕнĕ техникăпа хуçалăхăн тĕп инженерĕ Валерий Анатольевич Леонтьев.

– Çанталăкĕ шăрăх тăрать те ку тапхăр чир-чĕрпе сăтăрçăсене вăй илме шеп те меллĕ вăхăт. Апла пулсан вăхăтра акса-лартса хăварнă культурăсене сыхласси çине те пӳрне витĕр пăхас марччĕ, – калаçăва хутшăнчĕ Зоя Яковлевна агроном хăйĕн сăмахĕнче çур акире ĕçленисене тав туса. – Акана тăватă агрегат хутшăнчĕ: 3 сеялкăллипе Виталий Иванов тата пĕр сеялкăллисемпе Александр Рыжковпа Юрий Антонов, Александр Бурцев. Николай Никифоров МТЗ-82 тракторпа çĕр улми лартрĕ. Иртнĕ çул çĕртме сухи нумай туса хăварни çур аки ĕçĕсене хăвăртлатрĕ кăна.

Мастерскойĕнче механизаторсен тепĕр ушкăнĕ тепĕр йышши çĕнĕ агрегата ĕçе хатĕрлет. Ку вăл – çур акиччен туяннă, уй-хирте çĕр хатĕрлессипе ĕçленĕ, паян çĕр улми речĕсене кăпкалатма тухакан, кĕр çитсен çеçкене çулакан доминатор. Унпа Бурцевсен династийĕнчи чи çамрăк механизатор Михаил ĕçлемелле. Пĕрремĕш çул кăна-ха вăл тракторпа, çавăнпа ашшĕн ятне вараласран аслисен вĕрентĕвне шута илсех пырать. Унăн тăрăшулăхĕпе хуçалăх ертӳçин производство енĕпе ĕçлекен çумĕ Геннадий Пискарев кăмăллă.

Хуçалăхăн çĕнĕ техникипе паллашнă май 20 çул “хир карапĕпе” паркра ĕçлекен Валерий Ердуков механизатора тĕл пултăм.

– Çĕнĕ техника килет те, пытармастăп, тухăçлăрах ĕçлес кăмăл вăй илет. Çакна хуçалăхри кашни механизаторах паян пĕр евĕрлĕ калать, – терĕ Валера хăй иртнĕ кĕркунне ГОСТ-па килĕшӳллĕ управа лартнă ДОН– 1500 Б комбайнĕпе паллаштарнă май. Çывăхарах паллашсан Валера та механизатор династийĕн тăсăмĕ иккен. Унăн ашшĕ Василий Александрович çĕр ĕçĕнче пĕтĕмпе 50 çула яхăн трактористра вăй хунă, ывăлне те çак ĕç юратăвне халалланă.

Хуçалăха çĕнĕ техника килнишĕн унпа паян ĕçлекенсем çеç мар, тăван енре тивĕçлĕ канăва тухичченех шаннă ĕçшĕн ответлăха туйса ĕçленĕ ĕç ветеранĕсем те савăнăça пытараймаççĕ.

– Хамăн ĕç ĕмĕрне тăван ял çыннисенех халалларăм та паян та çамрăк ăру ашшĕ-амăшĕсем суйласа илнĕ çултан пăрăнманни хĕпĕртеттерет. Çĕнĕ техника илеççĕ пулсан, вĕсем татах малалла пăхаççĕ-тăр. Ку вара тăван хуçалăхпа çураçулăх çуратать, – терĕ хуçалăхри столовăйра 20 çул вăй хунă тата паян мехпарк хуралĕнче тимлекен Светлана Семеновна Тимофеева анчахрах тивĕçлĕ канăва тухнă, унччен çар служби хыççăн 20 çула яхăн хуçалăхра инженер-газовик пулса ĕçленĕ, ялсене çут çанталăк газĕ илсе çитерессипе нумай тимленĕ В. П. Микушкинпа çĕнĕ тракторсемпе-агрегатсемпе паллашнă май.

– Викентий Петрович, çĕнĕ техникăпа ĕçлеме сирĕн механизаторсем хатĕр тесе шутлатăр-и? – ыйтатăп хуçалăхра ырă ятлă В. Микушкинран. Унăн хуравĕ çар çыннин пек кĕске те уçăмлă пулчĕ. “Киввине юсаса çитерейрес çук. Ку çулпа кайиччен киввине 5 единица сутса иккĕ çĕннине илни вырăнлăрах та. Пирĕн механизаторсем вара çĕнĕ техникăпа ĕçлеме хатĕр. Çакна вĕсем техникăна упрасси çине çуллен епле тăрăшуллă пăхни те çирĕплетет”,– терĕ ветеран. Мĕнех, ĕç опычĕпе çиччĕ виççе калана сăмахсем. Вĕсемпе килĕшмесĕр май çук.



Тĕп инженер В. Леонтьев (сулахайри) тата хуçалăх ертӳçи Р. Тимофеев (сылтăмри) механизаторсемпе пĕрле.



Михаил Бурцевпа Геннадий Пискарева доминатор пурри савăнтарать.

Хуçалăхăн техника паркне çĕнетесси-вăйлатассипе пысăк ĕçсем туса ирттерекен Шурчасен председателĕпе Ростислав Николаевич Тимофеевпа та машинăпа тракторсен паркĕнчех тĕл пултăм. Çĕнни çине çеç пысăк тимлĕх уйăраканскер, юлашки вăхăтра ку енĕпе мĕн туса ирттернине уçăмлă каласа пачĕ.

– РФ Президенчĕ палăртнă “Ял хуçалăхне аталантарасси” наци проекчĕ пирĕнтен кашнинченех çĕнĕлле ĕçлесе çĕнĕ технологисене алла илсе производствăна йӳнĕрех хăйхаклăхпа аталантарма ыйтать. Çак çĕнĕлĕхсене çĕнĕ техникăсăр çăварлăхлама çук. Ку вара пĕр кунта тумалли ĕç мар. Ăна ăнланса тата çак çулпа кайса 2005 çулта инвестици кредичĕпе 865 пин тенкĕлĕх ДТ-75 бульдозерпа рулонлă пресс-подборщик туянтăмăр. Пĕлтĕр те пуçланă ĕçе чарса лартмарăмăр: инвестици кредичĕпе “Карпатец” погрузчик, апат хутăштаракан-ваклакан агрегат, çĕр хатĕрлекен ПАУК-3,6 тата KOS-3,2 агрегатсем, лизингпа ДОН-1500 Б комбайн кӳрсе килтĕмĕр. Кăçал вара наци проекчĕ пулăшнипе 8 миллион та 100 пин тенкĕлĕх çĕнĕ техника туянма тĕллев лартрăмăр та ĕçе кӳлĕнтĕмĕр, – терĕ хуçалăх ертӳçи пĕрлехи аталанура выльăх-чĕрлĕх отраслĕ те пысăк тĕкĕ пулнине палăртса.

**Анатолий БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

**Çурхи уй-хир ĕçĕсене вĕçленĕ май**

# Тар кăларнă акара, савăнчĕç Акатуйра

Июнĕн 2-мĕшĕнче Ильич ячĕллĕ хуçалăх территорийĕнче пурăнакансем Сосновка шкулĕн стадионĕнче акатуй ирттерчĕç. Ял çыннисене хуçалăх ертӳçи И.В. Николаев уяв ячĕпе тата çурхи ака-суха ĕçĕсене ăнăçлă вĕçленĕ ятпа ăшшăн саламларĕ,çур аки хастарĕсене, выльăх-чĕрлĕх пăхакансене тав сăмахĕ каларĕ, хаклă парнепе чысларĕ. Паллах ĕнтĕ, уявра юрă-ташă ăстисем те пулчĕç, вырăнти шкул коллективĕ, çак тăрăхра çуралса ӳснĕ, халĕ Муркашра, Шупашкарта пурăнакан “çăлтăрсем” халăха хăйсен пултарулăхĕпе савăнтарчĕç. Уявăн спорт программи те анлă пулчĕ.

Çак кун умĕн хуçалăхпа, унăн уй-хирĕпе, фермисемпе, ялсен сăн-сăпачĕпе паллашрăмăр. Тӳрех калăпăр, Ваçкасси тăрăхĕ юлашки вăхăтра тĕреклене, çĕнелсе пыни хытах сисĕнет. Хуçалăх ертӳçи çакна чи малтан «Хыпар” хаçатăн никĕслевçин, çак тăрăхра çуралса ӳснĕ Н.В. Никольский профессор ят-сумĕпе çыхăнтарчĕ. “Малтанхи вăхăтра хăнасене кĕтсе илме те именеттĕмĕр. Мĕнле-ха, урамсенче вĕлтренмăян çитĕнет, тĕрлĕ ăпăр-тапăр сапаланса выртать. Намăс! Халĕ ун пеккине кураймăн, çынсем йĕркелĕхе-тирпейлĕхе хăнăхрĕç. Ял хĕрринче, ав, кермен шкул ӳссе ларчĕ, унтах Н.В. Никольский музейĕ, спортзал турăмăр. Ял-ял витĕр асфальт çул иртет. Пахчасенче улма-çырла сачĕсем, килсен умĕнче чечексем. Паян эпир кирек кама та тулли кăмăлпа кĕтсе илетпĕр. Никам умĕнче те пит хĕрелмĕ”, – терĕ Игорь Николаев.

Хуçалăх ертӳçи кăçалхипе çиччĕмĕш çур аки ирттернĕ. Специальноçĕпе инженер-механик. Пĕтĕм ĕçе техника паркне çĕнетессинчен тытăннă. Паян кунта пысăк хăватлă тракторсем, тăпра кăпкалатма, тырă акма, вырса пухма, выльăх апачĕ хатĕрлеме туяннă çĕнĕ техника. Вĕсем энерги перекетлеме, хăвăртлăха ӳстерме, пахалăха лайăхлатма пулăшаççĕ. “Лизингпа çичĕ миллион тенкĕ кредит илсе туянтăмăр”, – тет Игорь Васильевич.

Хуçалăх выльăх-чĕрлĕх ĕрчетсе ытларах тупăш илет. Пĕлтĕр вăл çирĕм миллионран иртнĕ. Çулталăка тупăшлă вĕçленĕ. Выльăх витисене тĕпрен юсанă, тирпейлĕ çуртйĕр туса лартнă. Унччен çак вăхăтра куллен пĕр тонна сĕт сутнă. Халĕ 4 тонна яхăн ăсатаççĕ. Талăкри вăтам сăвăм – ĕне пуçне 15 килограмм. Сĕт цехĕ тума тытăннă, сĕт пăрăхĕ вырнаçтараççĕ, фермăсен территорине асфальт-бетон сараççĕ. “Ĕçре пушмакпа çӳремелле пултăр”, – тет хуçалăх ертӳçи. Хуçалăх 750 пуç ĕне выльăх тытать. Йыш нимĕн чухлĕ те чакман.

Сысна отраслĕнче чăннипех “революци” тунă. Виççĕмĕш çул ĕнтĕ çĕнĕ технологипе ĕçлеççĕ. Унччен фермăра 15-16 çын пулнă, паян – 6-7-ĕн. Тентран анлă вите туса лартнă. Унта пĕр вăхăтра 500 сысна самăртаççĕ, çулталăкра – икĕ çаврăм. Пĕр çын çулталăкра 1000 сысна самăртма ĕлкĕрет, 100 тонна какай туса илет. Рационта типĕ апат, талăкри ӳт хушаслăх – 600-650 грамм, ай сарăм – улăмран, хулăн. Хуçалăх выльăхĕсем валли комбикорм хăй вăйĕпе хатĕрлет. Пĕтĕмпе сыснасен йышĕ 1,5 пин пуç.

Паян уй-хир фермăшăн ĕçлет. Тĕп агроном Ф.А. Егоров Чăваш патшалăх ял хуçалăх академине пĕтернĕ хыççăн саккăрмĕш çул тăван хуçалăхра тăрăшать. Çак тапхăрта вăл “Çĕрпе туллин усă курсан, çуллен пысăк тухăç илсен çеç малалла кайма пулать” текен шухăша ăша хывнă. Сухалакан çĕрсем – 1400 гектар. Акмасăр хăварни пĕр пусăм та çук. Уйсем таса, кĕрхи тулă аван хĕл каçнă. Калча хӳхĕм ӳсет.

Çум курăк вуçех çук. Тырпула гербицидпа имçамлаççĕ. Хуçалăх гектартан нихăш çул та 25 центнертан кая тухăç илмест, хăш чух 40 центнера та капашнă.

Çурхисенчен тулă (ирень сорт), урпа (эльф), сĕлĕ (аргамак) пĕр тикĕс шăтса тухнă. Пĕр çул ӳсекен курăксем, куккурус акнă, 70 гектар çĕр улми лартнă. Кашни культура вăрлăхĕ элита е пĕрремĕш класлă. Нумай çул ӳсекен курăксем сухалакан çĕрсен 35 процентне йышăнаççĕ. Фермăсем валли апат тулăх пуласси халех паллă. Çĕр улми пуссинче ретсене кăпкалатма тытăннă.

“Пĕр çын сурать – типсе пырать, йышпа сурсан кӳлĕ пулать”, текен каларăша та килĕштерет тĕп агроном. Çур акинче тар кăларса тăрăшнă механизаторсен ячĕсене вăл ятран каласа тухрĕ. “Пĕрне те манса ан хăварăр”, – терĕ. А. Александров, Л. Макаров, Н. Ильин, И. Федотов 1470 гектар çинче нӳрĕк тытса хăварнă. Урапаллă тракторсемпе (“Беларуссем” пĕтĕмпе тенĕ пекех çĕнĕ) Н. Петров, В. Степанов, Г.Петров, В. Лукин, И. Порфирьев, Г. Павлов, Б. Емельянов çĕр хатĕрленĕ, тырă акнă çĕрте хастар тăрăшнă. В. Васильев çамрăк çара каяс умĕнхи кунччене хирте ĕçленĕ, ăна йышпа ăсатса янă.

Хуçалăх водителĕсем те пултаруллă. И. Никитин, М. Степанов, Ю. Михеев, Н. Булавин, А. Макаров, Г. Иванов, В. Ильин, уй-хире вăрлăх, ытти япала татти-сыпписĕр турттарса тăнă. Хĕрӳ вăхăтра та пĕтĕм ĕçе Г. Павлова диспетчер пĕр чăрмавсăр йĕркелесе пынă. А. Абрамов, М. Иванов, М. Никитина бригадирсем маттур. Сăмах май, вĕсене правлени ятарлă транспортпа тивĕçтернĕ.

Хуçалăхра йыш çителĕклĕ пек. Çапах та Игорь Васильевич специалистсем ытларах кирлĕ тесе шутлать. Пуласлăх – вĕсенче. Хальхи вăхăтра Чăваш патшалăх ял хуçалăх академийĕнче çак хуçалăхран пилĕк çамрăк вĕренет.

Механизаторсемпе танах хирте ял çыннисем те тăрăшнă. Вĕсем – пĕрремĕш бригадăран Л. Егорова, Г. Алексеев, Е. Иванова, иккĕмĕшĕнчен – З. Антонова, Т. Дмитриева, виççĕмĕшĕнчен – Н. Васильев, А. Алексеева тата ыттисем.

Тĕп зоотехник Д. Тимофеева ферма ĕçченĕсене те хаçатра палăртма ыйтрĕ. Ĕне сăвакансем З. Семенова, Р. Терентьева, Н. Иванов, пăру пăхакансем А. Аврамова, Е. Клементьева, сысна ферминче ĕçлекенсем П. Клементьева, М. Васильева продукци илессине ӳстерессишĕн вăй-хала шеллемеççĕ.

Хуçалăхра ĕç династийĕсем йышлă. Аврамовсен ĕç стажĕ 308 çул, Платоновсен – 292, Аникинсен 188 çул. Мăн аслашшĕ-аслăмăшĕсен вырăнне халĕ хуçалăхра вĕсен мăнукĕсен ачисем тăрăшаççĕ, йăха малалла тăсаççĕ.

Шăпах çакăн пек çынсем паянхи акатуйра тав сăмахĕсене тивĕç пулчĕç.

– Ĕçлекенсене чысламалла, хавхалантармалла. Çакă кашнин чун-чĕринче çĕнĕрен вăйхăват хушĕ, – тет Ильич ячĕллĕ кооператив ертӳçи И.В. Николаев.

Пуласлăх утăмра халăх вăйĕ çине шанать вăл.

**Леонтий АЛЕКСЕЕВ.**